27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ИЮНЬ
9
ЭРНЕКУН
113 (6608) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ÇĔРТМЕ ТĂВАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ республикăри колхозсенче кăçал çĕртме тăвасси çинчен ыйту пăхса тухнă. Республикăра вăхăтра çĕртме тăвассине тата çĕртме тунă пусăсене тĕрĕс пăхса тăрассине хаклама пулать, нумай колхозсенче çĕртме ĕçне пуçламан. Чи хура Пăрачкав, Куславкка, Первомайски, Чкаловски, Шăмăршă тата ытти чылай районсенче çĕртме тăвас ĕçе кал хăварчĕç, ку ĕçе хăвăртлатма тата çĕртме тунă пусăсенче пахалăха хаклассине мобилизацилеменшĕн, çавна пула çĕртме пусăсене çумкурăксем пусма илнĕ, çавна пула çĕртме сухине кĕрлеттерсен авал умĕн тин тупĕç. ...

Çĕртме сухине вăхăтра туса хăварас тата çĕртме пусăсене малашне лайăх ĕçлесе çĕмĕртсе хăварас тĕллевпе, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. Райсовет исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене тата МТС директорĕсене çакăнта тума хушмалла:

а) çуркунне пĕтнĕ май çийĕнчех çĕртме сухине тăвас ĕçе пуçăнмалла, çĕртме тунă çĕре 700 тракторпа кал мар тăвармалла, 10.000 пулман кал мар тăвармалла, плугсемпе ĕçлесе тивĕçле тарăн лашасене çапла çĕртме тăвас малалла. Тракторсемпе лашасене мĕн чухлĕ ĕçлени çинчен çĕртме ĕçе кăтартса пама;

б) çураннинче пуçланса пынă май МТС-сен мĕнпур тракторĕсене тата лашасене сийĕнчех çĕртме тунă çĕре кусарса пымалла, тракторсемпе лашасене çураки хыççăн чарăнса тăма памалла мар;

в) колхозсенчи тата колхозниксен килкартийĕсенчи мĕнпур тислĕке, çапла пекех тата ытти çĕр удобренийĕсене пĕтĕмпех çĕртме пусăсене турттармалла.

2. Райсовет исполкомĕсене тата ВКП(б) райкомĕсене МТС-сен тăрăх çĕртме тумалли план-задание кал пилĕкун хушшинче парса пĕтермелле.

Райсовет исполкомĕсен председателĕсене, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене тата МТС директорĕсене çав пилĕкун хушшинче колхозсене трактор бригадисем патне ик кунлăха сăтĕр тĕрлĕ çапла çĕртме тумалли ĕç графикне тума хушас.

3. МТС директорĕсене çĕртме тунă çĕре мĕнпур предплужниксемпе сухалама хушас.

4. Çĕртме сухи пахалăхне тĕрĕслес тата çĕртме пусăсене малашне тĕрĕс çĕмĕртсе тăмалли ĕçе пуçласа яма ерçев пахалăхне хаклама, тĕрĕслеме çакăн пек агротехникăлла йĕркесене пăхăнмалла:

а) çĕртме тракторсемпе — 18 сантиметртан ăшăх мар, лашапа ĕçлекен плугсемпе 16 сантиметртан ăшăх мар сухалама;

б) сухаланă хыççăнах çĕртмесе пыммалла, çĕртмесем сухаласенчен кая хăварма мар;

в) çĕртме пусăсене таса тытас тата культивацилес, çав шутра çумкурăксем тухнă май тата тăпăрлăх тухнă чухне ĕçлесе пымалла;

г) таса çĕртме сухаласене — июнĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, тăпăрла пулса умĕн ĕçлесе кайса, августăн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр çĕртме тума пăхмалла;

д) ыраш культурăсемпе пыçланă çĕртме пусăсене çак ĕçсемпе сухаламалла: клевер пыçланă çĕртме пусăсене — июлĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр, вика пыçланă çĕртме пусăсене июлĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр сухаламалла;

е) çĕртме пусăсене вика акас умĕн тислĕк тăкмалла, тракторсемпе çĕр ĕçлекен предплужниксемпе сухаласа çĕртме пусăсене тăрмалла тата тислĕкпе çĕрĕ çинчех культивациленĕ çĕрсенче тулли тислĕк тăкмалла, ытти мĕнпур тислĕкпе торфа таса çĕртме тумалли пусăсене турттармалла, çав çĕрсене çак 1945 çулта пуçласа хурмалла, çав чухне çулсем çĕртме участоксене 18—20 сантиметр çапла сухалаççĕ.

5. Райсовет исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС директорĕсене колхоз председателĕсене çакна тума хушас:

а) çĕртме тунă çĕре уйрăм çĕлпшнисене ĕçлемелле;

б) çĕртме тума ситĕнĕ колхозниксене уйăрмалла, çак отрядсене çĕр сутмен çамрăксене шанса памалла мар;

в) çĕртме сухине мĕнле тунине тата кулленех нормăсене пулăмсене ĕçлесе пыма мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе контрольлесе тăмалла;

г) кашни колхозрах çĕртме сухине пахалăхпа колхоз предсе-дателĕсен бригадирсемпе тата пахалăх инспекторĕсемпе пĕрле тĕрĕслесе йышăнмалла. Колхоз председателĕсене лашасемпе е тракторсемпе начар тунă çĕре йышăнма чарас, çак çĕре урăх тунăшăн айăплисене отвечать турттармалла.

6. Чăваш АССР Çĕр Халăх Комиссарне Малов юлташа çĕртме тăвас, тислĕк турттарас тата çĕртме пусăсене пахалăхне çĕклесси пирки тăрас ĕçсем мĕнле пынине тата вĕсен çитменлĕхĕсене тĕп кулли тĕрĕслесе тăма хушас.

Хĕрлĕ Çар офицерĕсене, сержанчĕсене тата рядовойĕсене Совет Союз Геройĕн ятне пани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн, çавăн чухне хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн кăçалхи июнĕн 4-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар офицерĕсене, сержанчĕсене тата рядовойĕсене ытти пурне Ленин орденĕпе тата «Ылтăн çăлтăр» медальпе наградăласа Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Совет Союз Геройĕн ятне пурĕ 83 офицера, сержанта тата рядовоя панă. (ТАСС).

Бронетанковăй çарсен маршалне П. А. Ротмистрова маршалсен паллине — „Маршал Çăлтăрне" пани

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕн пĕрремĕш Заместителĕ М. И. Шверник юлташ июнĕн 6-мĕшĕнче Кремльре бронетанковăй çарсен маршалне Павел Алексеевич Ротмистрова маршалсен паллине — «Маршал Çăлтăрне» панă.

Çав кунах М. И. Шверник юлташ гварди генерал-лейтенантне Павел Васильевич Миронова Хĕрлĕ Ялав орденне панă. Çак орденпа вăл нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан пысăк фронтĕнче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çавăн чухне хăюллăх кăтартнăшăн наградăланă. (ТАСС).

В. М. Молотов юлташ Итали правительствин представительне П. Кеаронн господина йышăнни

Июнĕн 6-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Итали правительствин Совет правительстви çумĕнчи нумай пулмасть Мускава килнĕ представительне П. Кеаронн господина йышăннă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 6-мĕшĕнче ЯССЫ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата çурçĕртерехри районра пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пур атакисене те ăнăçлăн сирсе янă. Июнĕн 5-мĕшĕнче ку районра нимĕçсен 49 танкне çĕмĕрсе тăкнă, 42 самолетне персе ÿкернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Июнĕн 5-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 48 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ЯССЫ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔПЕ ЯССЫ ХУЛИНЧИ ВĂРÇĂ ОБЪЕКЧĔСЕНЕ ТАПАННИ

Июнĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци йышлăн вĕçсе кайса Яссы чугун çул узелне тата Яссы хулинчи (Румыни) вăрçă объекчĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула 90 вырăнта хăн пушарсем тухнă. Чугун çул составĕсем, станци сурчĕсем, тăшманăн çар склачĕсем çуннă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Яссы хули сывăхĕнчи чугун çул станцийĕсенче темиçе эшелона пулеметсемпе тапа тупăсемпе персе вут тивертсе янă. Пушар çулăмне пирĕн летчиксем каялла 100 километр вĕçсе кайсан та курса пынă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

ИЮНĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 7-мĕшĕнче ЯССЫ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата çурçĕртерехри районра пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пĕчĕк вăйĕсен атакисене сирсе янă. Тĕрĕсленĕ даннăйсем тăрăх, майăн 30-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 6-мĕшне çитиччен пирĕн çарсем тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем кÿнĕ: нимĕçсен 315 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине персе çунтарса янă, 29 бронемашинăпа бронетранспортер, тĕрлĕ калибрлă 62 хир туппи, 240 пулемет тата 400 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 451 самолетне персе ÿкернĕ. Тăшман, вилнисене кăна шута илсен те, хăйĕн 10.000 салтакĕпе офицерне ытла çухатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Июнĕн 6-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 54 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЯССЫ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔПЕ ЯССЫ ХУЛИНЧИ ВĂРÇĂ ОБЪЕКЧĔСЕНЕ ТАПАННИ

Июнĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци йышлăн вĕçсе кайса каллех Яссы чугун çул узелĕпе Яссы хулинчи (Румыни) вăрçă объекчĕсене тапăннă. Бомбăсем тÿрех пырса тивнипе тăшманăн темиçе чугун çул эшелонĕ çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем тухнă. Вагонсем, платформăсем, цистернăсем тата çар склачĕсем çуннă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн икĕ самолет хăйсен базисене таврăнман.

☆ ☆ ☆

Яссы хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата çурçĕртерехре тăшманăн тимлĕхĕ чылай пусаранчĕ. Уйрăм участоксенче кăна нимĕçсен пехоти танксем пулăшнипе темиçе атака тунă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшман атакисене сире-сире ярса, нимĕçсемпе румынсен 200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 5 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен тупă тата 3 бронетранспортер çунтарса янă. Паян ирхине пирĕн пĕр часть тăшмана хăйне хирĕç пырса çапнă, малалла куçса пырса икĕ çуллĕ вырăна туртса илнĕ. Çав районра румыни салтакĕсен роти тыткăна парăннă.

* * *

Тирасполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн наблюдательсем тăшманăн пытанса ларнă 2 танкне курнă. Никольски сержант ертсе пыракан тупă расчечĕ хăйĕн туппине уçă позицие кăларнă та тĕл персе нимĕçсен танкĕсене çунтарса янă.

* * *

Витебск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре гитлеровецсен вицĕ ушкăнĕ пирĕн боевой охранение атакăланă. Хаяр тытăçу пуçланса кайнă, тăшмана каялла ывăтса янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 60 вилли выртса юлнă.

Пĕр чаçри снайперсем Алексей Русаков старшинапа Джуман Эсиркеев сержант кун-каçа 8 нимĕçе вĕлернĕ. Снайпер-красноармеец Шумбасов 6 кун хушшинче тăшманăн 13 салтакне вĕлернĕ.

* * *

Июнĕн 5-мĕшĕнче çĕрле Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн торпеда яракан катерĕсен икĕ ушкăнĕ тăшман карапĕсене шырама тухнă. 3-мĕш рангри капитан Свердлов юлташ командир пулса ертсе пыракан катерсен ушкăнĕ нимĕçсен 4 тральщикне курнă та çавăнтах атакăланă. 3-мĕш рангри капитан Старый юлташ командир пулса ертсе пыракан катерсен иккĕмĕш отрячĕ тăшман карапĕсен ушкăнне курнă та çавăнтах карапсем патне питĕ хăвăрт пырса çитсе вĕсене атакăланă. Çапла пирĕн катерсен çак икĕ ушкăнĕ нимĕçсен 5 тральщикне шыва путарнă.

* * *

Станислав облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр ялта канма чарăнса тăнă тăшманăн пехота подразделенине тапăннă. Совет патриочĕсем 22 нимĕçе вĕлернĕ, вуннăшне тыткăна илнĕ. Партизансен тепĕр отрячĕ 4 кун хушши нимĕçсемпе венгерсен карательнăй экспедицийĕпе çапăçнă. Гитлеровецсем çав отряда çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкасшăн пулнă. Партизансем хăйсене çавăрса илнĕ унка татса кĕнĕ те çапăçуран тухнă. Темиçе кун иртсен çав отрядри партизансен ушкăнĕ нимĕçсен çар эшелонĕ кĕрсе кайнă чугун çул кĕперне сирпĕнтерсе янă. Паровоз тата тупăсем тиенĕ 7 платформа шыва йăтăнса аннă.

* * *

Кăнтăрла советсен истребителĕ хамăр территори çине нимĕçсен «Юнкерс-88» йышши бомбардировщикне антарса ларттарнă. Инçене вĕçекен разведчиксен 100-мĕш ушкăнри 1-мĕш отрядра тăнă стрелок Маяс Дрюбиш, халь тыткăна лекнĕскер, çапла каласа кăтартнă: «7.000 метр çÿллĕшĕнче эпир пирĕн паталла пысăк хăвăртлăхпа вĕçекен вырăссен истребителĕ сывхарнине куртăмăр. Эпир, çапăçас мар тесе, аяккалла тарма пуçларăмăр. Анчах та вырăссен истребителĕ пире часах хăваласа çитрĕ те пирĕн ирĕксĕрех анса лармалла пулчĕ. Çак эрне хушшинче пирĕн отрядра 3 самолет пĕтрĕ. Вĕсенчен икĕ самолетне вырăс истребителĕсем çапса антарчĕç, пĕр самолетне зенитнăй артиллери персе ÿкерчĕ. Юлашки вăхăтра нимĕç летчикĕсем пĕрре те çапăçăва вĕçсе тухса каясшăн мар. Мĕншĕн тесен эпир вырăс истребителĕсемпе вырăс зенитчикĕсенчен хытă шикленетпĕр».

* * *

Румынсен 14-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 39-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчи 2-мĕш взвод командирĕ пулнă тыткăна лекнĕ лейтенант Константин Лечинте çапла каласа кăтартнă: «Апрелĕн малтанхи çур уйăхĕнче пирĕн полка аркатса тăкрĕç. Салтаксем нумайĕшĕ нимĕçсемшĕн çапăçма килĕшмесĕр тарса пĕтрĕç. Днестр шывĕ урлă 3-мĕш батальон юлашкийĕсем кăна каçса çăлăнса юлчĕç. Полк командирне Маринеску полковника вырăнтан кăларса яма пачĕç. Пирĕн дивизие çĕнĕ вăйсем хушса пачĕç те каллех малти позицисене ячĕç. Çак кунсенче 5-мĕш ротăна шоссе çулĕ çинчи пĕр участока туртса илме приказ пачĕç. Пире çапла шантарса ĕнентерчĕç: вырăссен позицийĕсене мĕнпурĕ те 60 салтак кăна хÿтĕлесе тăраççĕ, çавăнпа та 5-мĕш рота çав участока пĕр çухатусăрах туртса илме пултарать терĕç. Анчах та атака вăхăтĕнче йăлтах пăтранса кайрĕ. Вырăссем пире темиçе енчен те пăшалсемпе, пулеметсемпе пеме пуçларĕç. Эпир çав вут-çулăм айне пултăмăр. Атакăра пирĕн нумай салтак пĕтрĕ, анчах та эпир нимĕнле çитĕнÿ те тăваймарăмăр. Эпĕ хамăрăннисенчен таçта аяккалла тăрса юлтăм, вара мана тыткăна илчĕç».

Ÿкерчĕн çинче: Пирĕн паттăр земляк, Отечественнăй аслă вăрçă геройĕ — генерал-лейтенант Александр Николаевич Боголюбов. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1944 çулхи майăн 29-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Александр Николаевич Боголюбов генерал-лейтенанта боевой операцисене пĕлсе те хăюллăн ертсе пынăшăн тата çав операцисене пула фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çитĕнÿсем тунăшăн 1-мĕш степень Суворов орденĕпе наградăланă. Çапла А. Н. Боголюбов генерал-лейтенантăн халĕ çакăн пек орденсем пур: Хĕрлĕ Ялав орденĕ, 1-мĕш степень Кутузов орденĕ, 1-мĕш степень Богдан Хмельницкий орденĕ, 1-мĕш степень Суворов орденĕ.

А. Н. Боголюбов юлташ Чăваш республики столицинчен — Шупашкар хулинчен.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

С. Т. Митряшов юлташа Чăваш АССР Государство Хăрушсăрлăх Халăх Комиссарне лартасси çинчен

Семен Трофимович Митряшов юлташа Чăваш АССР Государство Хăрушсăрлăх Халăх Комиссарне лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1944 çулхи июнĕн 7-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Г. С. Федотов юлташа СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйне лартасси çинчен

Григорий Самсонович Федотов юлташа СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйне лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1944 çулхи июнĕн 7-мĕшĕ.

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кроссне республикăра 55.400 çын хутшăннă

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ республикăра анлăн саралса пырать. Кросс пуçланнăранпа республикăри нумай пин çамрăксем чупас тата гранатăсем ывăтас тĕлĕшпе ГТО нормисене парса, хăйсен пултаруллăхне, вăйне тата тăван çĕршыва хÿтĕлеме хатĕр пулнине кăтартса пачĕç.

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче, рабочисем пурăнакан поселоксенче тата колхозсенче кашни кунах ăмăртусем чулса иртеççĕ. Кросс Çĕрпÿ, Етĕрне, Красноармейски, Советски районсенче уйрăмах ăнăçлăн иртсе пырать. Çĕрпÿ районĕнче кроса ку таранччен 4.128 çын хутшăннă, вĕсенчен I-мĕшпе II-мĕш сыпăк ГТО нормисене тата БГТО нормисене 3.539 çын панă. Етĕрне районĕнче 2.054 çын хутшăннă, вĕсенчен ГТО тата БГТО нормисене 2.044 çын панă. Красноармейски районра — 1.794 çын, Советски районра — 2.036 çын хутшăннă. Кроса Шупашкарти, Улатăрти тата Канашри çамрăксем активлăн хутшăнаççĕ.

Анчах республикăра профсоюзпа комсомолăн кросĕ çаплипех çителĕксĕр пырать-ха. Уйрăмах Куславкка, Елчĕк, Йĕпреç, Чкаловски тата Улатăр районĕсем юлса пыраççĕ. Асăннă районсенчи ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсем кросс ирттерес ĕçе тивĕçлипе организацилесси çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ. Йĕпреç райкомолĕн секретарĕ Афанасьева юлташ: «кросс ирттерме вăхăт çук», тесе ларать. ВЛКСМ-ăн хăшпĕр райкомĕсен секретарĕсем кросс начар иртнине «çанталăк начар пулнипе» витме пикенеççĕ. Ку тĕрĕс мар. Чылай районсенче кросс ирттерессине лайăх организацилеме пултарнă пулсан, республикăри пур районсенче те çавăн пек тума пултарнă.

Вăхăт кĕтмест. ВЛКСМ райком секретарĕсен, профсоюзпа спорт обществисен кроса кăтартуллăн ирттерме хăлех талăкла мерăсем йышăнмалла. Пирĕн республикăра 1942 çулта çуллахи кроса 96.000 çын, 1943 çулта 143.000 çын хутшăннă пулсан, кăçал унтан та ытларах явăçтармалла тăрас пулать. Ăна тума пирĕн пур майсемпе условисем те пур. Большевикла тимлĕхпе ĕçлени çеç кирлĕ.

Америка авиацийĕ тăшманăн Румынири вăрçă объекчĕсене тапăнни

Июнĕн 6-мĕшĕнче Италире американецсен бомбардировочнăй авиацийĕн соединенийĕсем хăйсен истребителĕсем пулăшса тăнипе тата совет авиацийĕпе пĕрле, Совет Союзĕнчи авиабазăсем çинчен вĕçсе улăхса, тăшманăн Галац хули районĕнчи (Румыни) вăрçă объекчĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахса, тăшмана чылаях пысăк сиен кÿнĕ.

Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 6 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Операцире пулнă самолетсем, 2 истребительсĕр пуçне, пурте хăйсен базисене таврăннă. (ТАСС).

Республикăри ĕççыннисем Ферапонт Головатый пуçарăвне йышăнаççĕ

Геройсем валли самолетсем илме

Муркаш районĕнчи Оринкасри „Красное Сормово" колхоз председателĕ П. Н. Майковпа фермăсен заведующийĕ С. М. Соловьев юлташсем пирĕн земляк Совет Союзĕн Геройĕ Федот Никитич Орлов валли пĕр боевой самолет илме иккĕшĕ 100 пин тенкĕ, колхозри пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ Е. А. Смеловпа колхоз счетоводĕ В. Н. Волков юлташсем хамăрăн земляк Совет Союзĕн Геройĕ Борис Михайлович Васильев валли тепĕр боевой самолет илме 50-шар пин тенкĕ панă

МУРКАШ, июнĕн 8-мĕшĕ. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Лăпкă ир. Хĕвел хăйĕн ăшă пайăркисене çĕр çине сапалать. «Красное Сормово» колхоз колхозникĕсем, ĕçе тухнă май, клуб умĕнчи çерем çине пухăнчĕç. Тăван çĕршывăн сулăмлă патриочĕ Ферапонт Петрович Головатый пуçарăвне сÿтсе явас ыйтупа митинг пуçланчĕ.

Митинга колхоз председателĕ Петр Николаевич Майков юлташ уçать. Унтан ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Сергеев юлташ, колхозниксемпе колхозницăсене Ферапонт Головатый колхозникĕн çĕнĕ, чаплă пуçарăвĕ çинчен тĕплĕн каласа парса, çав пуçарăва йышăнма чĕнет.

Сăмах татах Петр Николаевич Майков илет.

— Ферапонт Головатый колхозник аслă сулпуçăмăр Сталин юлташ патне сырнă сырăва вуласан, — тет вăл, — эпир ферма заведующийĕпе Сергей Матвеевичпа, хамăр фронта мĕнле пулăшма пултарасси çинчен канашларăмăр. Эпир, Головатый примерĕпе, хамăрăн паттăр земляк Совет Союзĕн Геройĕ Федот Никитич Орлов юлташ валли пĕр боевой самолет туянма иккĕн 100 пин тенкĕ пама йышăнтăмăр. Пирĕн укçа нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çĕнсе пĕтерсе тăкма Тăван Хĕрлĕ Çара пулăштăр.

Майковпа Соловьев юлташсем Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшма тăрăшаççĕ. Хĕлле, республикăри колхозниксем государствăна тырă сутнă вăхăтра, Майков юлташ 100 пăт, Соловьев юлташ 84 пăт сутнă. Çĕнĕ заема Майков юлташ 5.000 тенкĕлĕх, Соловьев юлташ 7.000 тенкĕлĕх çырăннă. Халĕ акă самолет туянма 50-шар пин тенкĕ параççĕ.

Халăх умне пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ Ефим Андреевич Смелов юлташ тухать.

— Хамăрăн ĕçри юлташсенчен юлмастпăр, — тет вăл. Унтан колхоз счетоводĕ Василий Никонович енчелле çаврăнать те çапла калать:

— Василий Никонович, тавай иксĕмĕр хамăрăн земляк Совет Союзĕн Геройĕ Борис Михайлович Васильев валли тепĕр самолет туянса парар.

Счетовод Василий Никонович Волков — паллă бригадирĕн сĕнĕвне хапăл туса йышăнать. Вĕсем боевой самолет туянма 50-шар пин тенкĕ пачĕç.

Митинг пысăк çĕкленÿпе иртрĕ. Митинга пухăннă колхозниксемпе колхозницăсем Головатый юлташ патне çыру яма йышăнчĕç. Митинг хыççăнах колхозра Хĕрлĕ Çар валли боевой самолетсемпе танксем тата вăрçă техники тума укçа пухас ĕç пуçланчĕ.

Т. ИВАНОВ.

ШУПАШКАРТИ ПРЕДПРИЯТИСЕМПЕ УЧРЕЖДЕНИСЕНЧЕ

** Государство банкĕн коллективĕнче Хĕрлĕ Çар валли самолетсемпе танксем тума укçа пухасси сарăлсах пырать. Паянхи куна пурĕ 40.700 тенкĕ пама çыраннă. Вăл шутран облигацисем 22.250 тенкĕлĕх тата укçан 15.665 тенкĕ. Ку таранччен 2.820 тенкине хывнă.

** Ачасен пĕрремĕш номерлĕ яслинче ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çар валли самолетсем тума 4.045 тенкĕ пухса, государство банкне хывнă.

Оборона фондне

Пăрачкав районĕнчи Антипово чиркÿ приходĕнчи ĕненекенсем оборона фондне ылттăн пывăпа çырлалă кĕмĕл кăкшăм, 22 кĕмĕл çĕрĕ, 2 кĕмĕл хăлха унки тата ытти нумай япаласем панă.

Республикă уйхирĕсенче

1944 çулхи июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсенче çураки ĕçĕсем мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Пурĕ акнă иртнĕ çулхи курăксемсĕр пуçне (процентпа)	Вăл шутра: Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсем (проц.)	Çĕрулми (проц.)	Пахча-çимĕç (проц.)	Кантăр (проц.)	Махорка (проц.)	Йĕтĕн (проц.)	Фермăсем çумĕнчи участоксене акнă (процентпа)
Сĕнтĕрвăрри	102,4	104,2	101,6	51,6	72,6	—	—	45,0
Вăрнар	102,4	109,4	92,8	88,0	102,6	54,0	85,0	102,0
Красноармейски	102,1	104,1	100,0	88,4	100,0	15,2	—	81,0
Элĕк	101,7	105,2	76,2	72,0	89,5	—	—	40,0
Шупашкар	101,7	102,2	100,1	100,5	104,0	—	—	61,7
Куславкка	101,6	102,8	109,2	78,8	87,5	—	—	26,3
Çĕрпÿ	101,2	102,6	100,0	93,0	100,0	50,0	—	97,0
Чурачăк	101,1	102,3	100,5	80,3	100,0	50,0	—	40,0
Сĕнтĕр	101,0	102,1	100,0	76,0	100,0	—	—	44,0
Муркаш	101,0	100,0	90,9	81,2	8,8	—	—	61,6
Калинино	100,9	106,0	91,5	87,8	86,0	53,4	—	71,0
Вăрмар	100,8	101,2	99,1	101,7	93,4	—	—	150,0
Октябрьски	100,4	101,8	96,3	60,8	79,1	—	—	29,0
Ишлей	100,1	99,8	90,1	93,0	72,3	—	—	64,1
Етĕрне	100,1	101,4	96,2	102,0	79,7	—	65,3	37,5
Елчĕк	100,1	102,3	86,9	82,5	98,5	—	—	46,6
Канаш	100,0	105,8	69,2	75,9	87,5	—	—	27,6
Шăхасан	100,0	100,1	85,3	90,4	89,2	—	—	76,0
Советски	98,0	100,0	94,0	62,5	80,1	—	—	36,0
Тăвай	98,0	101,7	75,0	100,0	95,0	34,6	26,0	103,0
Комсомольски	94,2	98,6	55,2	48,0	80,4	—	—	37,7
Çĕмĕрле	89,2	121,7	56,3	60,0	69,0	14,6	42,0	41,5
Йĕпреç	83,7	96,7	45,5	109,0	82,0	10,7	45,5	34,1
Первомайски	82,4	95,7	51,2	70,0	91,0	—	29,5	70,0
Чкаловски	80,0	88,9	30,8	77,7	47,1	—	—	36,0
Пăрачкав	77,1	84,3	41,1	27,5	—	23,7	48,8	60,0
Улатăр	75,4	83,5	19,8	29,0	—	42,0	16,0	29,5
Хĕрлĕ Чутай	74,1	86,5	46,1	37,7	39,0	—	21,0	51,0
Шăмăршă	70,9	75,1	16,8	42,8	22,8	—	—	62,5
Кувакино	64,9	73,6	21,5	76,0	—	2,7	27,0	96,0
Шупашкар хули	103,6	128,6	98,0	37,5	—	—	—	93,0
Пĕтĕмпе	94,2	98,1	81,2	75,3	79,5	26,6	39,9	58,1
Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă	88,7	93,7	69,3	54,8	64,7	13,6	30,3	42,6

Ишлей, Етĕрне, Елчĕк тата Тăвай районĕсем те çураки планне тултарнă

Ишлей районĕнчи колхозсем июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне 10.060 гектар вырăнне 10.072 гектар акса плана 100.1 процент тултарнă.

Етĕрне районĕ 10.412 гектар акса çураки планне 100,1 процент тултарнă. Çĕрулми лартмалли плана 96,2 процент, пахча-çимĕç лартмалли плана 102,0 процент тултарнă; кантăр 79,7 процент, йĕтĕн 65,3 процент акнă.

Елчĕк районĕ 22.692 гектар акса плана 100,1 процент тултарнă. Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсем 102,3 процент, çĕрулми 86,9 процент, пахча-çимĕçсем 82,5 процент, кантăр 98,5 процент акнă.

* * *

ТĂВАЙ, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Паян районри колхозсем, 13.300 гектар вырăнне 13.310 гектар акса, çураки планне тултарнă. Çĕрулми 76,5 процент, йĕтĕн 30 процент, кантăр 103 процент акнă. Пахча-çимĕçсене 150 гектар вырăнне 160 гектар лартнă.

Лихачев подсобнăй хуçалăхра пахча-çимĕç лартас ĕçе чăрмантарать

Куславкка комбиначĕ кăçал подсобнăй хуçалăхра 43 гектар çинче пахча-çимĕç туса илмелле. Вăл шутран 5 гектар помидор, 20 гектар купăста, 7 гектар хăяр лартмалла тата ытти те. Подсобнăй хуçалăхри агроном Сусликов юлташ тăрăшнипе пахча-çимĕçсен çак вăрлăхĕсене çителĕклĕ таран тупса акнă, çав çимĕçсен калчисем куçарса лартма ĕлкĕреççĕ.

Малтанлăха пăхсан ĕç лайăх тăнă пек курăнать. Çĕр çителĕклĕ, кирлĕ çимĕçсен калчисем те пур, ĕçлеме рабочисем те хатĕр. Анчах, чăннипе илсен, ĕç пачах урăхла тăрать. Подсобнăй хуçалăхăн директорĕ Лихачев: пахча-çимĕç мĕн вăл, пыльăхсем пулччăр, — тесе ответлет.

Пахча-çимĕçсем акас ĕç çине Лихачев çакăн пек пăхни ĕçе ытла та чăрмантарать. Пахча-çимĕçсен калчисем парникре çитĕнеççĕ. Унта 600 рама. Вĕсенчен 287-шне витмелли хатĕрсем çак вăхăта çитсе те хатĕрлемен. Çавна пула вĕсем сивĕпе пĕтес хăрушлăхра тăраççĕ. Ку çеç те мар, Лихачев пахча-çимĕç лартмалли çĕре халиччен те сухалаттарман. Ку тĕлĕшпе Сусликов темиçе хутчен те ун патĕнче пулнă, çĕр типсе хытни çинчен те кăтартса панă. Пахча-çимĕçсем патĕнче ĕçлеме кирлĕ инвентарьсемпе туртăм вăйĕ çак вăхăта çитсе те уйăрса паманнă.

Лихачев хăйĕн киревсĕр ĕçĕпе пахча-çимĕç тăвассине чăрмантарать, комбинатри рабочисене пахча-çимĕçсĕр тăратса хăварас хăрушлăха кăларса тăратать. Лихачев айăпĕпех 43 гектар çĕр сухаламасăр типсе выртать. Тăпра хытать, тăпрара пахча-çимĕçшĕн кирлĕ нÿрлĕх типсе пырать.

И. ШАРКОВ.

Силос хываççĕ

МУРКАШ, июнĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозри выльăхсем валли çителĕклĕ апат хатĕрлесси çуллахи вăхăтра тимлĕн ĕçленинчен нумай килет. Малта пыракан колхозсем выльăх апачĕн çирĕп никĕсне хывассишĕн ĕçлеме тытăнчĕç те ĕнтĕ. «Красное Сормово» колхоз (председателĕ П. Н. Майков юлташ) çак кунсенче сухакурăксемпе ял хушшинче ÿсекен тĕрлĕ курăксене пухса 10 тонна силос хывнă. Унсăр пуçне 5 центнер армути, пĕр центнер вĕлтрен пухса типĕтнĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах фермăсен заведующийĕ С. Соловьев юлташ лайăх ĕçлет.

Силос хывас ĕçе районри ытти колхозсем те тытăнчĕç. Çатракасси ялсоветĕнчи «Пионер» колхоз та 16 тонна силос хывнă.

Зоотехник М. ПОТАПОВА.

Уборкăна хатĕрленеççĕ

Шупашкар районĕнчи Сарапайкасси ялсоветне кĕрекен «Туçи» колхозри тимĕрçĕсем—Кудрявцевпа Филиппов юлташсем уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем çамрăк-ха, анчах ĕçре пултаруллă. Вĕсене колхозниксем юратаççĕ, мухтаççĕ.

Çамрăк тимĕрçĕсем молотилкăсем, жнейкăсем юсама тытăнчĕç. Урапасене юсаса пĕтерне. Вĕсем кулленхи нормăна 150-шар процент тултарса пыраççĕ.

А. ПАВЛОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Сĕт-çу хатĕрлемелли фронтовой уйăхлăх ирттересси çинчен

Государствăна сĕт памалли çур çулхи плана тултарас тата промышленноçри рабочисемпе Хĕрлĕ Çар валли çупа чăкăт çителĕклĕ хатĕрлес шутпа Чăваш АССР Совнаркомĕ июнĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 10-мĕшне çитиччен сĕт хатĕрлес тата çу-чăкăт тăвас тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăх ирттерме йышăннă.

СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне, уйăхлăх ирттерме йышăннă май, пур районсем валли те уйăхлăхăн кашни кунĕнче мĕн чухлĕ сĕт хатĕрлемелли график тума хушнă.

Маслопромăн Чăвашпрестне (Васильев юлташа) мĕнпур заводсенче, сепараторнăй тата сĕт пухакан пунктсенче кунне виçĕ хутчен сĕт илессине организацилеме хушнă. Сĕт пухакансене çирĕп контрольлесе тăма, сĕте килĕрен пухассине тата кирлĕ вырăна вăхăтра çитерессине организацилеме хушнă.

Обязательство тăрăх сĕт паракансем хушшинче сĕте срокчен парса татас тĕлĕшпе, райсовет исполкомĕн председателĕсемпе Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсене сĕт парассинчен хăтарнă колхозниксем, рабочисем, служащисем тата уйрăм хуçалăхсем хушшинче, çавăн пекех сĕт парса татнă хуçалăхсем хушшинче те Хĕрлĕ Çар боецĕсен сывлăхне сыхламалли фонда сĕт парассине организацилес тĕлĕшпе массăллă-политикăллă ĕçе анлăн туса пыма хушнă.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Франци çыранĕнчи операцисем

ЛОНДОН, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çĕрле çурçĕртен пуçласа ирхине 8 сехет çитиччен, сывлăшра, авиадесант çарĕсене шутламасăр, союзниксен 31.000 летчикĕ пулнă. Операцисем туса пыракан районра çав вăхăт хушшинче 10.000 тонна бомба пăрахнă.

Союзниксен çарсем илсе пыракан суднисен караванне тăшманăн çыранри оборона артиллерийĕ пени пулман.

Парижри радио ĕнер каçхине çапла пĕлтернĕ: Руан хулинчен çурçĕртерехре союзниксен сывлăшри десант çарĕсен пысăк соединенийĕсемпе Германи чаçĕсем хушшинче хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Ĕнер Англипе Америкăн сывлăшри десант чаçĕсем Нормандия утравĕсем çине, Гернсипе Джерси çине (Ла-Манш), анса ларнă. Рейтер агентствин çар корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Франци союзниксен çарĕсем анма тытăнас умĕн, шурăмпуç килнĕ вăхăтра, Франци çыранĕсене союзниксен 600 ытла çар карапĕ çинчи тупăсем пеме пуçланă. Бомбăсем вĕçĕмсĕр çурăлнипе таврари пĕтĕм сывлăш кисренсе тăнă. Десантсем çырана анас умĕнхи чи юлашки вунă минут хушшинче кăна çыран çине фугаслă снарядсем 2.000 тонна ытла ÿкнĕ. 7 сехет те 25 минутра штурмлакан ушкăнсен малтанхи салтакĕсем çыран тăрăх саланса чупма пуçланă.

Тинĕсре тем пысăкăш транспортсем темиçе çĕршер тăраççĕ. Десант суднисем çинче туп-тулли çарсем, танксем, тупăсем тата темĕн тĕрлĕ бронеавтомобильсем.

Континент çыранне анса ларасси план çакă виçĕ тапхăртан тăнă:

1. Сывлăш десантне тата парашют çарĕсене тăшман тылне антарса лартасси.

2. Анса лармалли пунктсем çине çĕрле Англи авиацийĕ бомбăсем вăйлăн пăрахасси.

3. Франци çыранне союзниксен 600 ытла линкортан, крейсертан, монитортан тата эсминецсенчен тăракан çар флочĕн артиллерийĕ пересси.

4. Тул çутăлнă хыççăнах, малтан пырса çитнĕ çарсене антарас умĕн, тăшман позицийĕсем çине американецсен авиацийĕн мĕнпур вăйĕсем юлашки хут тĕплĕн бомбăсем пăрахасси.

Президент Рузвельт Çурçĕр Францири операцисем çинчен пресс-конференцире калани

ЛОНДОН, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, президент Рузвельт паян каçхине пресс-конференцире çапла каланă: Францири операцисем «малтанах палăртса хунă план тăрăх» пулса пыраççĕ. Американецсен тинĕсре мĕн пурĕ те икĕ миноносецпа пĕр десант карапĕ кăна пĕтнĕ.

ВАШИНГТОН, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Пресс-конференцире Рузвельт çапла каланă: континент çине пырса анасси малтанах палăртса хунă план тăрăх пулса пырать.

Пресс-конференцире панă ыйтусене ответлесе, президент çапла каланă: Тегеран хулинче пулса иртнĕ конференцире континент çине хăçан анмалли вăхăта татрăмăр, çав вăхăтпа Сталин пĕтĕмĕшпех килĕшрĕ. Континент çине май уйăхĕн вĕçĕнче е июнь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче анма пуçлассине Рузвельт пĕлсе тăнă. Анчах та хăш числара анма пуçлассине юлашки темиçе кун хушшинче кăна палăртса хунă, мĕншĕн тесен, вăл Ла-Манш çинче мĕнле çанталăк тăнинчен килет.

Континент çине Ла-Манш урлă пĕчĕк суднăсем те каçма пултарнă вăхăт хушшинче анма тытăнмалла пулнă, ун пек вăхăт Ла-Манш çинче май уйăхĕн юлашки кунĕсенчен иртерех пулмасть.

Малалла Рузвельт çапла каланă: аслă военнăй стратегин ыйтăвĕсене тата иккĕмĕш фронт ыйтăвне 1941 çулхи декабрь уйăхĕн вĕçĕнчех сÿтсе-явнă, унтанпа вăл ыйтусене кашни конференцирех сÿтсе-явнă.

Рузвельтран çакăн пек ыйтнă: континент çине хăш вырăнтан пуçласа анасса Тегеранри конференцире палăрт-са хăварнă-и?—тенĕ. Палăртса хăварман, тенĕ Рузвельт. Малалла президент çакăн çинчен каланă: хăш кун анма пуçласси яланах улшăнса пыма пултарать, мĕншĕн тесен вăл стратеги ыйтăвĕ. Хăш кунпа хăш сехетре анса ларма пуçлас ыйтăва Верховный командовани аллине панă, вара çав ыйтăва Эйзенхауэр татса панă.

Пĕр корреспондент Рузвельтран çапла ыйтнă: кунта çÿрекен хыпарсем тăрăх, Хĕрлĕ Çар сывăхри 48 сехет хушшинче тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапма пуçламалла, çав сăмахсем тĕрĕс-ши?—тенĕ. Ун пек ыйтусем пани вырăнлă мар, тенĕ Рузвельт. Рузвельта тата çакăн пек ыйту панă: французсен вăрттăн ĕçлекен ушкăнĕсем континент çине аннă çарсемпе килĕштерсе ĕçлеме тытăннă та ĕнтĕ теекен хыпарсем пур, çавсем тĕрĕс-ши? — тенĕ. Халиччен ун пекки пулман-ха, тенĕ Рузвельт.

Рузвельт çакна палăртса каланă: вăрçă пĕтмен-ха. Континент çыранĕсем çине пиртĕ çăмăллăн анса ларнипех Берлин хули çинелле пĕр чăрмавсăрах куçса пыма çук, çакна пирĕн çĕршывăн ăнланса илес пулать, тенĕ.

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй командовани штабĕн пĕлтерĕвĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй командованийĕн штабĕ 2-мĕш № коммюнике пичетлесе кăларнă. Коммюникере çапла каланă: «1944 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче çурçĕр çитес умĕн çĕрлехи бомбардировщиксем, наступлени пуçарса ярса, çапăçма тытăннă. Питĕ пысăк вăйсен атакисем тул çутăличченех пынă. Вара июнĕн 6-мĕшĕнче ирхине 6 сехет те 30 минутпа 7 сехет те 30 минут хушшинче тинĕс çар вăйĕсен икĕ соединенийĕ тăшман çыранĕсем çине наступлени тума пуçланă. Пĕтĕм тинĕс-çар вăйĕсене унччен пурне те Бертрам Рамсей адмирала пăхăнтарнă. Вара çав вăйсем лайăх çанталăк тăнă сехетсенче тинĕсе пухнă. Çĕр каçиччен çав вăйсем çумне пысăк çар карапĕсем хутшăннă, унччен вĕсем çурçĕрти шывсем çинче пулнă».

Коммюникере малалла çапла каланă: минăсем лартса тултарнă вырăнсене тасатнă хыççăн десант суднисем çыран хĕрнелле кайма тытăннă. Вăл суднăсене эсминецсем çинчи артиллери персе хÿтĕлесе тăнă. Çав вăхăтрах пысăк карапсем çинчен тăшман батарейисене пеме пуçланă, вĕсене унччен сывлăшран тапăнса бомбăсем пăрахнă.

«Десантсем континента анса ларнă чухне, — тенĕ малалла коммюникере, — тăшман вăйĕсене сывлăшран та, тинĕсрен те вăйлăн персе çĕмĕрсе тăнă. Нумай пунктсенче десант çарĕсене ăнăçлăн антарнă, çав çарсене антарас ĕçе транспорт самолечĕсем тата планерсем хутшăннă, вĕсем çинче пысăк вăйсем куçнă.

Çарсем аннă пунктсенчен килекен хыпарсем пирĕн çарсем десант операцийĕсен малтанхи тапхăрĕнче çитĕнÿсем туни çинчен калаççĕ. Халĕ çарсем аннă участокра çапăçусем пыраççĕ. Йывăр, вăтам тата çăмăл бомбардировщиксемпе бомбардировщик-истребительсен пысăк вăйĕсем кун каçипех тăшманăн артиллери батарейисем çине, оборона сооруженийĕсем çине тата çулйĕрсем çине бомбăсем пăрахнă. Çав вăйсене пĕтĕм çыран тăрăшшĕпех тата континент ăшĕнче чылай шалта истребительнăй авиаци таттисăрах хÿтĕлесе тăнă, çавăн пекех ытла истребительнăй авиаци Ла-Маншри тинĕс операцийĕсен районĕнче те хÿтĕлесе тăнă.

Пирĕн авиацие хирĕç тăшман истребителĕсемпе зенитнăй артиллерийĕ вăйлă хирĕç тăрса çапăçни пулман. Вăрçă карапĕсен сухатăвĕсем питех те сахал тесе шутлаççĕ; çав сухатусем, операцисен анлăшне шута илсен, уйрăмах пĕчĕккĕн курăнаççĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй командованийĕн штабĕ 3-мĕш № коммюнике пичетлесе кăларнă. Коммюникере çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем ĕнер кунĕпех Францин çурçĕр çыранне десантсем антарса тăнă. Çитĕнÿсем çителĕклĕ тесе шутламалла. «Коммандос» отрячĕсем штурмлакан вăйсен пĕр пайĕ пулнă. Тăшманăн тинĕс-çар вăйĕсем пирĕн десантсене тинĕсрен чăрмантарас тĕлĕшпе çĕнĕрен нимĕн те туман. Вĕсен çыранри халĕ те персе тăракан хăшпĕр батарейисене союзниксен çар карапĕсен артиллерийĕ персе тăрать.

Ĕнер каç пулма тытăннă вăхăтранпа кун каçиччен тăваттăмĕш хут ĕнтĕ пирĕн йывăр бомбардировщиксем чугун çулсене атакăланă. Тăшман сывлăшра хирĕç тăни ÿссе пырать. Союзниксен авиацине кансĕрлеме тăнă тăшман авиацийĕн 26 самолетне персе ÿкернĕ.

Çак операцирен пĕр бомбардировщикпе 17 истребитель хăйсен базине таврăнман.

Тăшман авиацийĕ пирĕн континента анса ларнă вăйсене атакăланă. Вĕсен атаки ăнăçлă пулман. Тăшманăн 12 самолетран тăракан соединенийĕнчи «юнкерс—88» йышши 4 самолечĕ пĕтнĕ.

Ĕнер кун каçиччен союзниксен авиацийĕн вăтам тата çăмăл бомбардировщикĕсем темиçе хутчен те Абанкурти, Серкри, Амьенри тата Вирри чугун çул узелĕсене, кĕперсене, вăрçă сооруженийĕсене тата çулсене тапăннă».

Коммюникере çакна палăртнă: союзниксен авиацийĕ тăшман чаçĕсемпе моторизованнăй транспорт колоннисене аялтан вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă.

Коммюникере малалла çапла каланă:

Авиадесант операцийĕсене иртнĕ çĕр каллех ăнăçлăн пуçласа янă.

Çыранри оборонăн самолечĕсем Бискай заливĕнче Германи карапĕсене атакăланă.

Каçхи йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем çарсем анса ларнă сектор хыçĕнчи кĕперсене, шоссе çулĕпе чугун çулсене, вăл шутра Шатоден чугун çул узелне, тапăннă.

13 йывăр бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман. Çăмăл бомбардировщиксем те çавăн йышши çар объекчĕсене тапăннă, вĕсем тăшманăн 12 самолетне пĕтерсе тăкнă, хăйсен нимĕнле сухатусем те пулман.

Рамсей адмирал пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Радио саракан «Колумбия» ятлă компанийĕн корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен экспедициллĕ тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕ Рамсей адмирал çапла каланă: десант операцийĕсен пĕрремĕш тапхăрĕ пĕтĕм 100 процентчĕпех ăнăçлă пулса иртрĕ тенĕ.

Вăл çапла каланă: тинĕс-çар командованийĕ десант баржисем çинче нимĕçсен артиллерийĕн вутĕнчен тата минăсем хунă вырăнсене пырса кĕнипе 10 процент таран сухату пулать пуль тесе шутланă. Анчах та нимĕçсем вăйлă хирĕç тăрайманнине пула çарсен çăмăл суднисем çинче кăна пысăк мар сухатусем пулчĕç, ун пек сухатусем çарсен десант операцийĕсене тума нимĕн чухлĕ те кансĕрлеймерĕç.

Рамсей çапла пĕлтернĕ: союзниксен çарĕсем çыранри укрепленисен оборони ăшне кĕрсе кайнă, тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРЕСЕМ АННА РАЙОНСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтернĕ: халлĕхе паллă пулнă тăрăх, союзниксен çарĕсем аннă район Франци çыранĕнчи Гавр хулинчен пуçласа Шербург хулине çитиччен выртакан пĕтĕм участока йышăнса тăрать.

Союзниксен десант çарĕсене, уйрăмăн илсе каласан, Гавр районĕнче çавăн пекех тата Орнпа Вир шывĕсен вăррисем хушшинче антарнă. Нимĕçсен радиовĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен чи пысăк десант вăйĕсем Шербургран хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре анса ларнă.

—◎—

ИТАЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ЛАРАВĔ

АЛЖИР, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Бари хулинчи радио çапла пĕлтернĕ: паян министрсен совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура тулашри тата шалти политика ыйтăвĕсене сÿтсе-явнă. Министрсен совечĕ 1940 çулта Петэн представителĕсемпе Муссолини представителĕсем тунă перемири условийĕсене пăрахăça кăларма йышăннă.

БАДОЛЬО МАРШАЛА ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУМА ХУШНА

ЛОНДОН, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Итали наместникĕ Умберто принц июнĕн 6-мĕшĕнче Бадольо правительстви отставкăна тухнипе килĕшнĕ. Умберто принц çавăнтах Бадольо маршала çĕнĕ правительство тума хушнă. Çав правительствăна хальхи вăхăтра ирĕке кăларнă Римра пурăнакан политика лидерĕсене кĕртме хушнă. Отставкăна тухнă кабинет çĕнĕ правительство тăвиччен кулленхи ĕçсене тума пăрахмасть.

Итали правительстви Рима куçассине палăртман-ха. Вăл малтанхи пекех Салерно хулинче пулмалла.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Италире тăшмана пĕтерессишĕн пыракан çапăçусем вăйлăланнăçемĕн вăйланаççĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн çарĕсем хальхи вăхăтра Тибр шывĕ урлă нумай вырăнсенче каçнă, шыв-вăн леш енче 8 километр малалла куçнă. Ку секторта тăшман вăйлăн хирĕç тăни çук. Виа Касселина çулĕнчен çурçĕртерехри тÿпесенче тăшман акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсемпе çаплах хытă хирĕç тăрса çапăçать. Кунта нимĕçсем хăйсен каялла чакакан çарĕсене хÿтĕлесе тăрасшăн. Ку секторта тăшман Палена станцине (Римран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре) тата ту çинчи темиçе позицие пăрахса хăварнă.

ЛОНДОН, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн Тибр шывĕ урлă каçнă чаçĕсем малалла куçса пыраççĕ, тăшман вĕсене хирĕç вăйлă тăрса çапăçмасть. Хальхи вăхăтра 5-мĕш арми чаçĕсем Римран çурçĕрелле 16 километр кайнă. Римран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Плоешти районĕнчи нефть тасатакан заводсем çине, Брашовпа Питештыри (Румыни) тата Белградри (Югослави) сортировка станцийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Ытти соединенисем тăшманăн Римран çурçĕртерехри тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри çарĕсен тылĕнчи вăрçă объекчĕсене тапăннă, çавăн пекех тата Вăтам Италипе Югославин хĕвеланăç çыранĕнчи объектсене атакăланă.

Ĕнер кăнтăрла çапăçусен районĕнче тăшманăн пĕр самолечĕ те пулман.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: акăлчансен 8-мĕш армийĕн фрончĕ халĕ 70 миля сарлакăш тăсălса выртать, çав фронт Рим секторĕнче американецсен 5-мĕш армийĕн фрончĕпе пĕрлешнĕ.

Адриатика тинĕсĕ хĕрринчи фронт участокĕнче лăпкă.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: нумай вырăнсенче нимĕçсем каялла ним йĕркисĕр-паллисĕр чупсах тараççĕ. Малалла хăвăрт куçса пыракан акăлчан çарĕсен колоннине 2000 нимĕç тыткăна парăннă, вĕсене акăлчансем Тибр шывĕн хĕвелтухăç енче çавăрса илнĕ пулнă. Нимĕçсен аркатса тăкнă 14-мĕш çарĕн арьергардра пыракан чаçĕсем кăна вăйсăррăн та пулин хирĕç тăраççĕ.

Югославири çапăçусем

ТИТО МАРШАЛĂН ПРИКАЗĔ

ЖЕНЕВА, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армийĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Хĕвеланăç Боснире ирĕке кăларакан армийĕн чаçĕсем тăшманăн моторизованнăй пысăк чаçĕсемпе хаяррăн çапăçаççĕ. Тăшман чаçĕсем авиаци хÿтĕленипе наступлени туса пыраççĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армин боецĕсем хăйсен çĕрĕн кашни шитне хÿтĕлесе çапăçаççĕ, тăшмана йывăр сухатусем кÿреççĕ.

Ытти фронтсенче халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армийĕн чаçĕсем, верховнăй главнокомандующин приказне пурнăçа кĕртсе, тăшман гарнизонĕсен колоннисене тата çулйĕрĕсене тапăнса тăраççĕ.

Çак кунсенче пичетлесе кăларнă приказра маршал Тито çапла калать: нимĕçсемпе вĕсен хÿрешкисем — Недич, Павелич тата Михайлович — Югославире поражени тÿсмелле пулнине кура, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армие çĕмĕрсе тăкассишĕн юлашки вăй-халне хурса çапăçаççĕ, çапла майпа вĕсем хăйсен салтакĕсен тата нимĕç халăхĕн шухăш-кăмăлне çĕклесе ярасшăн. Нимĕçсемпе вĕсен хÿрешкисем васкаççĕ, — тенĕ приказра, — мĕншĕн тесен вĕсем çакна лайăх пĕлеççĕ: Хĕрлĕ Çар тата Англипе Америка çарĕсем вĕсене татăклăн пырса çапас кун çывхарса килет.

Тито маршал халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армийĕн мĕнпур чаçĕсене, Югославири партизансен отрячĕсене нимĕçсен гарнизонĕсем вăйсăрланнă фронтри мĕнпур участоксенчи чи кирлĕ опорнăй пунктсене тата тăшманăн çар объекчĕсене çине тăрсах татăклăн тапăнма хушнă.

ЖЕНЕВА, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армийĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Хĕвеланăç Боснире тата Банире çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Словенире югославсен 2-мĕш бригадин боецĕсем Дравоград хули патĕнчи чугун çул станцине пĕтерсе тăкнă. 7 паровоз тата 14 вагона сиенленĕ. Дравоград хулипе Марибор хушшинче нимĕçсен çар поездне ÿпĕнтерсе янă.

Ново Место хулинчен кăнтăртарахра югославсен 15-мĕш бригадин боецĕсем тăшманăн пысăк колоннине аркатса тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçаççĕ.

—◎—

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ **Л. К. Щербаков** юлташа Чăваш АССР Государство Хăрушсăрлăх Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

* * *

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ **Т. Г. Герасимов** юлташа СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июнĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех

„МАРТ—АПРЕЛЬ"

ятлă саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартать.

Тĕп рольсенче:
Янина Жеймо—Катя Веселова.
Олег Жаков—капитан Жаворонков.
Софья Ланская—Люба Михайлова.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малалли кунсем валли те сутаççĕ.

Коллективсем хăйсен членĕсем валли билетсем малтанах илсе хума пултараççĕ.

Часах

„СЕВЕРНАЯ ЗВЕЗДА"

ятлă американецсен саслă, çĕнĕ илемлĕ фильмне кăтартма пуçлаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00171 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.